**Хисеплӗ депутатсем, чӗннӗ хӑнасем!**
**Чӑваш Енӗн хаклӑ ҫыннисем!**

Эпир 2020 ҫула кӗтӗмӗр.

Кӑҫал ҫӗршывӑмӑр чаплӑ куна – Тӑван ҫӗршывӑн Аслӑ вӑрҫинчи Ҫӗнтерӳ 75 ҫул тултарнине – паллӑ тӑвать. Пирӗн халӑх нихӑҫан манӑҫми мухтава тивӗҫнӗ – Тӑван ҫӗршыв никама пӑхӑнманлӑхне сыхласа хӑварнӑ, пӗтӗм тӗнчене фашизм чуралӑхӗнчен хӑтарнӑ.

Раҫҫей Федерацийӗн Президенчӗ Владимир Владимирович Путин палӑртнӑ пек, Раҫҫей малашлӑхне пирӗн патриотлӑх, Тӑван ҫӗршывпа ҫуралнӑ ҫӗре, тӑвансемпе ҫывӑх ҫыннӑмӑрсене чунтан юратни хӑват парса тӑракан ҫирӗп никӗс ҫинче йӗркелемелле.

Никама та манман, нимӗн те манӑҫман! Хӑйсен пурнӑҫне тӑнӑҫлӑхшӑн тата килес ӑрусен ирӗклӗхӗшӗн панӑ паттӑрсем нихӑҫан та асран тухмӗҫ. Ҫӗрӗн-кунӗн ӗҫлесе фронта мӗн кирлине пӗтӗмпех парса тӑнӑ хӗрарӑмсен, ватӑсемпе ачасен ӗҫри паттӑрлӑхӗ те хӑйне хӗрхенменлӗхӗн ӗмӗрхи ырӑ тӗслӗхӗ пулса юлӗ.

2020 ҫул ҫавӑн пекех тивлетлӗ чӑваш ҫӗрне, халӑхӑмӑрӑн культурине, авалхи йӑли-йӗркине сума сӑвакан пӗтӗм ҫыншӑн пӗлтерӗшлӗ, – эпир чаплӑ пулӑма, Чӑваш автономи облаҫӗ ҫӗр ҫул тултарнине, паллӑ тӑватпӑр!

**Ӗмӗр хушшинче пирӗн республика хӑйӗн пур енлӗ аталанӑвӗнче «суха пуҫӗнчен космоса ҫити» утса иртсе тӗлӗнмелле пысӑк ҫитӗнӳсем тунӑ.**

Хисеплӗ депутатсем, хаклӑ ҫыннӑмӑрсем!

2020 ҫул пирӗншӗн уйрӑмах паллӑ ҫулталӑк.

Эпир Чӑваш автономи облаҫне йӗркеленӗренпе 100 ҫул ҫитнине уявлатпӑр!

Паянхи промышленноҫпа ял хуҫалӑх, культурӑпа наука тата спорт ҫитӗнӗвӗсемпе эпир тивӗҫлипех мухтанма пултаратпӑр. Халӑхӑн пуян йӑли-йӗркипе истори еткерлӗхне сыхласа упрасси, ҫамрӑк ӑрӑва ӑс-хакӑлпа илемлӗх хаклӑхӗсене туйма вӗрентесси питех те пӗлтерӗшлӗ.

Ҫак чаплӑ уява паллӑ туни пирӗн вӑя тата та ҫирӗпрех пӗрлештерессине шанса тӑратӑп.

Паян Чӑваш Ен хӑватлӑ промышленноҫ вӑй-хӑвачӗпе, ку чухнехи пысӑк тухӑҫлӑ ял хуҫалӑхӗпе, лайӑх аталаннӑ социаллӑ сферӑпа палӑрса тӑрать.

Çакă пурте республикăра пурăнакан çынсен темиçе ăрăвĕн пĕрлехи ĕç кăтартăвĕ, вĕсенчен кашниех унта хăй пултарнă таран курăмлă тӳпе хывнă.

Чăваш Республикинче пурăнакансене тăван çĕре хастарлăн юратнăшăн, унăн ырлăхĕпе аталанăвĕшĕн ырми-канми тăрăшнăшăн пурне те тав тăватăп!

Пирĕн малашнехи аталану ытларах наци проекчĕсенче палăртнă стратегиллĕ тĕллевсене мĕнлерех пурнăçланинчен килет.

Çав проектсем технологи тĕлĕшĕнчи ĕç-хĕле хăвăртлатма, экономикăра экспорт тĕллевĕллĕ пысăк тухăçлă сектор туса хума, инфратытăма аталантарма, социаллă сферăна лайăхлатма пулăшас тĕллевлĕ.

Çитес виçĕ çулта вĕсене пурнăçлама республикăра 26 миллиард ытла тенкĕ яма палăртнă.

Анчах та сире çакна шута илме ыйтатăп: наци проекчĕсем пĕртен-пĕр тĕллев шутланмаççĕ. Вĕсем пирĕн тĕп тĕллевĕмĕре – халăх пурнăçĕн пахалăхĕпе тулăхлăхне лайăхлатассине – пурнăçламалли мел кăна.

Халăхăн чăн тупăшĕсене ӳстерни экономика аталанăвĕн тĕп кăтартăвĕ пулса тăрать. Çавăнпа та ăна тума, чи малтанах, экономикăн чăн секторĕнчи мĕн пур отрасльтех пысăк тухăçлă, лайăх шалуллă ĕç вырăнĕсем йĕркелемелле.

**Тухăçлă ĕç – ырлăх никĕсĕ!**

Халăх калашле, ĕçлемесессĕн, пурлăх пулмасть.

Хисеплĕ ĕçтешсем!

Ĕçе кĕнĕ программăсемпе проектсене пурнăçламалли тĕп хатĕр, паллах, вăйлă та çирĕп финанс тытăмĕ, çавăн пекех яваплă та шайлашуллă бюджет политики пулса тăраççĕ.

Пĕлтĕр Чăваш Республикин пĕрлештернĕ бюджечĕн тупăшĕсем, 2016 çулхипе танлаштарсан, 1,3 хут ӳсрĕç. Бюджетăн хăйĕн тупăшĕсем çав тапхăрта 1,2 хут пысăкланчĕç.

Бюджет инвестицийĕсем экономика аталанăвне хавхалантармалли витĕмлĕ вăй пулса тăчĕç. Вĕсене пула эпир ача сачĕсем, шкулсемпе культура керменĕсем, социаллă сферăпа сывлăх сыхлавĕн учрежденийĕсем тума, вун-вун поликлиникăпа больницăна юсаса çĕнетме, çĕршер çухрăм çул тума тата юсама пултартăмăр.

Бюджетăн инвестици тăкакĕсен тӳпи енĕпе Чăваш Ен 2019 çулта федерацин Атăлçи округĕнчи регионсен хушшинче иккĕмĕш вырăн йышăнчĕ. Çав

хушăрах, çакна уйрăммăн палăртса хăваратăп: тĕрлĕ проектпа программа валли бюджетран укçа-тенкĕ ытларах уйăрассине республикăн патшалăх парăмне тĕллевлĕн чакарса пынипе пĕрле туса пынă.

Пирĕн тĕп тĕллев, ăна пурнăçламаллине Раççей Президенчĕ хытарса палăртать, – чухăнлăхпа кĕрешесси тата халăх тупăшĕ ӳссе пырассине тивĕçтересси.

Ăна пурнăçлас тесен, пирĕн экономикăна çирĕппĕн ӳстерсе пымалла, ĕç тухăçлăхне пысăклатмалла, предпринимательлĕх пуçарулăхне аталантармалла.

Чăваш Ен Правительстви предприятисене патшалăх пулăшăвне илме мĕн пур майпа пулăшать. Хаклав тăрăх, республикăри промышленноç предприятийĕсене кӳнĕ çавнашкал пулăшăвăн калăпăшĕ 2019 çулта 1 миллиард та 800 миллион тенкĕпе танлашнă.

Шупашкарпа Канаш хулисенче индустри паркĕсене хута янă. Канаш хулинче социаллă пурнăçпа экономика хăвăрт аталанакан территори йĕркеленĕ. Çавнашкал территорие Çĕнĕ Шупашкарта та тума палăртнă.

Пĕлтĕр республикăри промышленноç производствин индексĕ çулталăк тăршшĕпех Раççейри çавнашкал кăтартуран пысăкрах шайра йĕркеленсе пычĕ тата, юлашкинчен, 104 процентпа танлашрĕ. Ӳсĕмĕн çавнашкал çӳллĕ шайри кăтартăвĕ уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ, мĕншĕн тесен промышленноç организацийĕсем пĕтĕм регион продукчĕн виççĕмĕш пайĕнчен ытларах калăпăшне йĕркелеççĕ тата республикăри мĕн пур шайри бюджетсене тӳлевсемпе пуçтарусен çурринчен ытларах пайĕ пырса кĕрессине тивĕçтереççĕ.

Юлашки 4 çулта çĕнĕ производствăсем туса хума тата халь ĕçлеккеннисене çĕнетме пирĕн промышленноç предприятийĕсем бюджет тулашĕнчи çăл куççенчен 170 ытла миллиард тенкĕ янă, 11 пине яхăн пысăк тухăçлă çĕнĕ ĕç вырăнĕсем йĕркеленĕ.

Тулашри экономика лару-тăрăвĕ йĕркеллех пулманнине пăхмасăр, 2019 çулта эпир экспорт ĕç-хĕлĕн кал-каллăхне сыхласа хăварма пултартăмăр. Республикăн тулашри суту-илӳ çаврăнăшĕ, хаклав тăрăх, АПШ çур миллиард ытла доллар шайне, çав шутра экспорт – АПШн 200 миллион ытла долларĕн шайне çитнĕ.

Экономикăри тата социаллă сферăри пысăк пĕлтерĕшлĕ тĕллевсене пурнăçлас ĕçе курăмлă тӳпе хывакан – производствăна аталантаракан, па-

халăхлă пулăшу ĕçĕсем паракан, çĕнĕ ĕç вырăнĕсем йĕркелекен – предпринимательсемпе организацисене тав тăватăп.

Экономикăра эпир хамăр ума мĕнлерех кĕске вăхăтлăх тата вăрах вăхăтлăх тĕллевсем лартатпăр-ха?

<u>**Пĕрремĕш тĕллев.**</u>

Экономикăна инвестицисем ытларах килсе тăрассине тивĕçтерес шутпа пĕлтĕрхи кĕркунне эпир регионти налук саккунĕсене, инвестици тунăшăн тупăшран илекен налука чакарассине пăхса хăварса, улшăнусем кĕртрĕмĕр. Паян налука чакармалли виçе предприятисем тунă тăкаксен суммин çур пайĕпе танлашать.

Раççей Федерацийĕн Президенчĕн Çырăвне шута илсе, налук ĕçне йĕркелесе пынă чухне республикăри налук тӳлекенсене пулăшу памалли мерăсене анлăлатмалла тесе шухăшлатăп. Министрсен Кабинечĕн республикăри Патшалăх Канашĕн депутачĕсемпе пĕрле çак ыйтăва кĕске вăхăтра татса памалла.

**Унсăр пуçне Чăваш Республикин Министрсен Кабинетне Промышленноçа тата инвестици ĕç-хĕлне аталантармалли фонда Чăваш Ен территорийĕнчи çĕр лаптăкĕсене пысăк технологиллĕ çĕнĕ производствăсем йĕркелеме суйласа илмелли тата хатĕрлесе çитермелли полномочисемпе тивĕçтерме сĕнетĕп.**

2020-2024 çулсенче Чăваш Республикин тĕп капиталне 350 миллиард тенкĕрен кая мар виçепе инвестицисем явăçтарассине тата пĕтĕм регион продуктĕнчи вĕсен тӳпине 27 процента çитерессине тивĕçтермелле.

Çакăн валли Чăваш Ен Экономика аталанăвĕн министерствине ĕç тăвакан влаç органĕсемпе тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе пĕрле республикăн инвестици аталанăвне вăйлатмалли хушма мерăсен комплексне туса хатĕрлеме хушатăп. Муниципалитет пĕрлĕхĕсен администрацийĕсен пуçлăхĕсем инвесторсемпе ĕçлени çинчен калакан отчетсене кашни кварталтах тăратассине йăлана кĕртни вырăнлă пулмалла тесе шутлатăп.

<u>**Иккĕмĕш тĕллев.**</u>

Республика «Ĕç тухăçлăхне ӳстересси тата ĕçпе тивĕçтерме пулăшасси» наци проектне пурнăçлакан Раççейри малтанхи 16 регион йышне кĕчĕ. Вăл производствăри вăхăт çухатăвне чакарма тата туса кăларакан продукци шутне пысăклатма тĕллев лартать. Проекта пурнăçлама паян пирĕн 30 ытла предприяти хутшăнать.

Çак «перекетлĕ производство» мелĕсене ĕçе кĕртмелли лайăх опытпа пирĕн республикăри предприятисенче те хастарлăн усă курма тытăнмалла тесе шухăшлатăп. Пирĕн тĕллев – 2024 çул тĕлне ĕç тухăçлăхне ÿстермелли мероприятисене 60-тан сахал мар организацие явăçтарасси.

**<u>Виççĕмĕш тĕллев.</u>**

Паян республикăри халăхăн виççĕмĕш пайне яхăн йышĕ пĕчĕк тата вăтам бизнес организацийĕсенче вăй хурать. Пĕтĕм регион продуктĕнчи вĕсен тÿпи 33 ытла процентпа танлашать, налукран кĕрекен укçа-тенкĕн 45 яхăн процентне республика бюджетне çав предприятисем парса тăраççĕ.

Пĕчĕк тата вăтам предпринимательлĕх субъекчĕсене çăмăллăхлă укçа-тенкĕ илмелли, оборудование лизинг мелĕпе туянмалли, патшалăх тата муниципалитет пурлăхĕпе усă курмалли, пысăк заказчиксен патшалăх туянăвĕсене хутшăнмалли майсемпе тата ытти пулăшу мелĕпе тивĕçтермелле.

**Чăваш Ен Экономика аталанăвĕн, промышленноç тата суту-илÿ министерствине пĕчĕк калăпăшлă финанс пулăшăвне илсе тăракансен шутне 2024 çул тĕлне 1,7 хут, çавăн пекех пĕчĕк тата вăтам предпринимательлĕх субъекчĕсене гарантиленĕ пулăшу парассин калăпăшне 9 миллиард тенке çитерме хушатăп.**

Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен, çавăн пекех пĕчĕк тата вăтам предпринимательлĕх субъекчĕсене вăйра тăракан саккунсемпе килĕшÿллĕн тара пама юрăхлă пĕтĕм пурлăха инвентаризаци туса ирттермелле.

Пĕрлехи ĕçĕн кăтартăвĕ 2024 çул тĕлне Чăваш Республикинче пĕчĕк тата вăтам предпринимательлĕх сферинче ĕçлекенсен шутне 20 процента çити – 190 пин çын таран – ÿстерни пулса тăмалла. Пĕчĕк тата вăтам предпринимательлĕхĕн пĕтĕм регион продуктĕнчи тÿпи асăннă тапхăрта 38 процента çити пысăкланмалла.

**Хисеплĕ ĕçтешсем, хисеплĕ депутатсем!**

Ялпа аграри отраслĕ валли уйрăм наци проекчĕ палăртман, анчах та çĕршыв Президенчĕ «çĕр ĕçченĕсемпе ял çыннисен интересĕсене кашни наци проектĕнчех шута илмеллине, мĕн пур ведомствăн планĕсемпе ĕçĕсене те уçăмлăн тата тĕплĕн йĕркелесе çитермеллине» палăртса хăварчĕ.

Ĕç коллективĕсен, инвесторсен тата патшалăхăн пĕрлехи ĕç-хĕлне пула юлашки çулсенче пирĕн республикăра агропромышленноç комплексĕ экономикăн хăвăрт аталанакан пайне çаврăнчĕ.

Пӗлтӗрхи пӗтӗмлетӳсем тӑрӑх ял хуҫалӑх производствин индексӗ 105,1 процентпа танлашнӑ.

Эпир федерацин Атӑлҫи округӗнче ҫӗр улми туса илес енӗпе пӗрремӗш, сӗт туса илессипе – иккӗмӗш, тӗш тырӑ туса илессипе – виҫҫӗмӗш тата акӑнакан лаптӑкӑн 100 гектар пуҫне шутласа аш-какай туса илессипе тӑваттӑмӗш вырӑн йышӑнатпӑр. Иртнӗ ҫул пахча ҫимӗҫпе ҫӗр улми тата тӗш тырӑ тухӑҫӗ республикӑри агропромышленноҫ аталанӑвӗн кун-ҫулӗнче халиччен пулман рекордлӑ кӑтартупа палӑрса юлчӗ.

Ку пысӑк ҫитӗнӳ, уншӑн пирӗн хамӑрӑн ял хуҫалӑх таварӗсем туса илекенсене чун-чӗререн тав тумалла.

Республикӑри агропромышленноҫ комплексӗ тӗнчери стандартсене тивӗҫтерекен продукци туса кӑларать. Ҫакна чӑваш апат-ҫимӗҫӗ лайӑх сутӑнни ӗненмелле ҫирӗплетет.

2013 ҫултанпа регионти агроэкспорт шайӗ 3,2 хут ӳснӗ. Унӑн вӑйлӑ енӗ, тӗпрен илсен, 80 процентчӗ ӗҫлесе тирпейлекен продукцирен йӗркеленни шутланать. Ҫакӑ чӗр тавара ӗҫлесе тирпейлененинчен пулакан укҫа-тенкӗ регион экономикинче, пирӗн ҫӗршыв экономикинче юлнине пӗлтерет. Ку туртӑма сыхласа хӑвармалла.

**Паян пирӗн ял хуҫалӑх таварӗсем туса илекенсем Чӑваш Енре пурӑнакансене апат-ҫимӗҫпе туллин тивӗҫтерсе тӑраҫҫӗ кӑна мар, унпа пӗрлех хӑйсен продукцине ҫулсерен тӗнчери 37 ҫӗршыва АПШн 25 миллиона яхӑн долларӗпе танлашакан шайпа экспорта ӑсатаҫҫӗ. Тата ҫакӑ юлашки чикӗ мар. Ҫитес 5 ҫулхи тӗллев – экспорт шайне икӗ хут ӳстересси.**

Ял хуҫалӑх производствине мӗн пур енӗпех ҫӗнетсе пыни отраслӗн ҫирӗп ӳсӗмӗн тӗп мелӗ пулса тӑрать.

Юлашки пилӗк ҫулта Чӑваш Ен агропромышленноҫ комплексне хывнӑ уйрӑм ҫын инвестицийӗсем 21 миллиард ытла тенкӗпе танлашнӑ. Ҫулталӑкне 5% ставкӑпа ҫӑмӑллӑхлӑ кредит илме май пулнӑран отрасль инвесторӗсем вӑрӑм укҫа мелӗпе усӑ курма пултараҫҫӗ, ҫакӑ та отрасль аталанӑвӗ ҫине лайӑх витӗм кӳрет.

Ку чухнехи пиллӗкмӗш ӑрури «Новочебоксарский» теплица комплексӗ уҫӑлнине ним иккӗленмесӗрех пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулӑм темелле, ӑна пула республикӑра теплица ҫимӗҫӗсем туса илесси 2,5 хут ытла ӳсет. Кунта ҫулсерен

20 пин тонна таран пахча ҫимӗҫ туса илме палӑртаҫҫӗ тата 2021 ҫулччен 500 яхӑн ҫӗнӗ ӗҫ вырӑнӗ йӗркеленмелле.

Уйрӑм ҫын инвестицийӗсемсӗр пуҫне, Чӑваш Ен агропромышленноҫ комплексне патшалӑх пулӑшӑвӗ мелӗпе кашни ҫулах 3 миллиарда яхӑн укҫа-тенкӗ каять. 2024 ҫулччен унта тата 15 миллиард тенкӗ хывма палӑртнӑ.

Йӑлана кӗнӗ пекех республика килти хушма хуҫалӑхсен тӳпи пысӑк регионсен йышне кӗрет. Эпӗ ҫакна унӑн вӑйлӑ енӗсенчен пӗри тесе шутлатӑп.

Паян килти хушма хуҫалӑхсем экономикӑн пӗлтерӗшлӗ пайӗ шутланаҫҫӗ тата туса кӑларакан ял хуҫалӑх таварӗсен калӑпӑшӗн 40 процентӗнчен ытларах пайне вӗсем туса илеҫҫӗ. Килти хушма хуҫалӑхсенчи ӗҫ тухӑҫлӑхӗ 10 ҫул хушшинче 2 хут ӳсрӗ. Халӗ пирӗн ҫав лайӑх пулӑмсене сыхласа хӑвармалла.

Ҫӗр пуянлӑхӗпе усӑ курассин тухӑҫлӑхне те ӳстермелле. Тӗслӗхрен, тӑпра йӳҫеклӗхне йӗркене кӗртес тӗлӗшпе тӑвакан ӗҫ кӑна хывакан укҫатенкӗн тухӑҫлӑхне 30 процент таран ӳстерме пултарать. Кӑҫалтан пуҫласа федерацин ҫӗнӗ программи ӗҫлесе кайрӗ, вӑл асӑннӑ ҫул-йӗр тӗлӗшпе тӑвакан тӑкаксен тӑхӑр вунӑ процентне ҫити саплаштарать. Ҫӗр ӗҫченӗсене асӑннӑ майпа усӑ курма чӗнсе калатӑп.

Ӑратлӑх ӗҫӗнче тата вӑрлӑх ӗрчетессинче наукӑпа тӗпчев ӗҫ-хӗлне пурнӑҫламасӑр ял хуҫалӑхӗнче малалла каяймастӑн. Паян республикӑра ҫӗр улми ҫитӗнтерес ӗҫре селекципе вӑрлӑх ӗрчетекен тӗп центр туса хунӑ (Раҫҫейре ӗҫлекен ҫичӗ центртан пӗри).**Черетлӗ утӑм ӑратлӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетессине аталантарма тата туса илнӗ ял хуҫалӑх продукцийӗн пахалӑхне ҫирӗплетме, ҫав шутра ӑна экспорта ӑсатма, кирлӗ пек пӗтӗм тишкерӗве тӑвакан аккредитациленӗ лабораторисем йӗркелесси пулса тӑмалла.**

**Ҫитес икӗ ҫулта халь ӗҫлекен сӗт-ҫу фермисене май килнӗ таран ҫӗнетмелле, 200 пуҫ выльӑхран пуҫласа унтан та ытларах хӑватпа ӗҫлекен ҫӗнӗ сӗт-ҫу комплексӗсем тӑвассине, пысӑк тухӑҫлӑ выльӑх-чӗрлӗх тӳпине ӳстерсе пырассине тивӗҫтермелле.** Ҫакӑ пурте производство калӑпӑшӗсене пысӑклатма, ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерме тата, юлашкинчен, ӗҫлекенсен ӗҫ укҫине хӑпартма май парать. 2020 ҫулхи бюджетра сӗт-ҫу фермисене ҫӗнетме тата ҫӗнӗрен тума 200 миллиона яхӑн субсидисем пӑхса хӑварнӑ та ӗнтӗ.

Пирӗн апат-ҫимӗҫ промышленноҫ предприятийӗсем Чӑваш Енре туса илекен пӗтӗм ял хуҫалӑх продукцине ӗҫлесе тирпейлеме пултараҫҫӗ. Сӗт пара-

кан выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре мала иртни хальхи хăватсене туллин ĕçлеттерме, çĕннисене ĕçе кĕртме май парать.

Хывнă инвестицисен тухăçлăхне отрасле цифрăлани шучĕпе ӳстерме пулать. Ку чухнехи цифра технологийĕсем ял хуçалăхĕнчи мĕн пур ĕçе васкавлăн тата пахалăхлăн асăрхаса тăма май параççĕ. Экспертсем палăртнă тăрăх, комплекслă цифрăлав ĕçĕ ял хуçалăх таварĕсем туса илекенсен тăкакĕсене сахалтан та 20 процента çити чакарма пулăшать.

**Агропромышленноç комплексне цифрăлассипе çыхăннă ĕçе хастарлăн хутшăнмалла тата отрасле вăйлăн аталантарма çĕршыври малта пыракан цифра платформисемпе май килнĕ таран ытларах усă курмалла. Вĕренӳ организацийĕсен çĕнĕ вĕренӳ çулĕнчен тытăнса агропромышленноç комплексĕнче цифра технологийĕсемпе усă куракан специалистсене хатĕрлеме пуçламалла.**

2020 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа федерацин органикăллă çĕр ĕçĕ çинчен калакан саккунĕ вăя кĕчĕ, вăл органика апат-çимĕçĕ туса кăлармалли майсене йĕркелет.

Аналитиксен шучĕпе, тĕнчере органика апат-çимĕçĕпе усă курассин ӳсĕмĕ апат-çимĕç рынокĕнчи ӳсĕм хăвăртлăхĕнчен икĕ хут пысăкрах. Органикăллă çĕр ĕçĕн вăйлă енĕ – производствăн маржинальноçĕ çӳллĕ шайра пулни (300% таран) тата экспортшăн лайăх майсем йĕркеленни.

Пирĕн органикăллă производствăна йĕркелесе яма мĕн пур май пур. **Çитес çулсенчех асăннă çул-йĕр валли инвестицисем май пур таран ытларах пухмалла тата пысăк ăсталăхлă кадрсем хатĕрлемелле.**

Халĕ Раççейре «симĕс бренд» концепци – экологи сăнлавĕсене лайăхлатнă ял хуçалăх продукцийĕсем туса кăларасси вăй илет. **Чăваш Ен Ял хуçалăх министерствин вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе пĕрле агропромышленноç комплексĕн организацийĕсем экологи сăнлавĕсене лайăхлатнă ял хуçалăх продукцийĕн çĕнĕ тавар паллине илес ĕçе хутшăнассине тивĕçтермелле.** Çакă вĕсене хăйсен продукцине çĕнĕ рыноксене кăларма, çав шутра экспорта ăсатма хушма майсем туса парать.

**Хисеплĕ ĕçтешсем!**

Чăннипех те, эпир агропромышленноç комплексне аталантарас енĕпе тăвакан ĕçсем пĕр тĕп тĕллеве – ял çыннисен пурнăçĕн çӳллĕ шайне тивĕçтерессине – тӳр килеççĕ.

Ялти ĕç укçи шайĕ экономикăри ĕç укçин вăтам виçинчен пĕчĕкрех пулни тытăмлă проблема пулса юлать. Юлашки пилĕк çулта, ял хуçалăхĕнчи ĕç тухăçлăхне 2,3 хут ӳстерсе, эпир çав уйрăмлăха 47 процентран 26 процента çити чакарма пултартăмăр. Анчах унăн кăтартăвĕ çав-çавах пысăк-ха.

Çав тапхăртах ял аталанăвне 10 миллиард тенкĕ ытла хывнă, 2019 çулта кăна – икĕ миллиард та улт çĕр миллион тенкĕ. Укçа-тенке çул-йĕрпе общество инфратытăмĕн объекчĕсене, социаллă объектсем тума тата юсама янă.

Пирĕн патра «Пĕрле яла илĕртӳллĕрех тăватпăр!» программăн тĕп тĕл-левĕ пуçаруллă бюджетировани мелĕпе 2017 çултан пуçласа ăнăçлăн пурнăçланать. Пĕлтĕр республикăра граждансен пуçарăвĕ çинче никĕсленекен 620 ытла проекта ĕçе кĕртнĕ.

Эпĕ граждансен пуçарăвĕ çинче никĕсленекен проектсене пурнăçлама хастарлăн хутшăнакан мĕн пур çынна пĕтĕм чунтан тав тăватăп. **Пирĕн пурин те пĕр тĕллев – кашни çыншăнах Чăваш Ене чи илĕртӳллĕ кĕтесе çавăрас-си. Çакна эпир пĕрле мĕнле пулсан та тăватпăрах**!

Кăçал ялти çăмăллăхлă ипотека мелĕ вăя кĕрет. Çăмăллăхлă ипотека кредичĕсене ял тăрăхĕнче çĕр лаптăкĕ илме, çурт-йĕр тума тата туянма уйăрса параççĕ. Кредита чи вăрахлăха паракан вăхăт – 25 çул, ăна 0,1 процентран пуçласа 3 процент таран ставкăпа уйăрса параççĕ. Çавăн пекех ĕç паракансем-пе муниципалитетсем пĕрле çурт-йĕр тумалли программа та хута кайнă, ăна 10 çултан ĕçченсем унăн хакĕн 1 процентчĕпе танлашакан хакпа хăйсем валли тӳлесе илме пултараççĕ.

**Çакă ялта ĕçлесе пурăнас текенсемшĕн пуриншĕн те питĕ лайăх пулăшу!**

Çав вăхăтрах ял тăрăхĕнче агропроизводствăна кăна мар, çаплах биз-несăн ытти тĕсĕсене те аталантарма кирлине палăртса хăварас тетĕп. Ял çĕрĕнче хăвăрт аталанакан территорисем туса хуни çак ыйтăва татса памалли тухăçлă мел пулса тăмалла.

**Республикăн Министрсен Кабинетне çавнашкал территорисене йĕр-келес енĕпе сĕнӳсем хатĕрлеме, çавăн пекех ял территорийĕсен кадр вăй-халне аталантармалли программăна, унта ял администрацийĕсем, çавăн пекех экономикăпа социаллă сферăсем валли специалистсем вĕрентсе хатĕрлессине кĕртсе, туса хатĕрлеме хушатăп.**

**Хаклă туссем!**

**Кашнийӗн ҫирӗп сывлӑхӗ – общество ырлӑхӗн никӗсӗ. «Сывлӑх пулсан веҫех пулать», – тесе халӑхра ахальтен каламаҫҫӗ.**

Хальхи сывлӑха сыхлас ӗҫ тытӑмӗ умӗнче тӑракан чи пӗлте-рӗшлӗ тӗллевсенчен пӗри сиплев ӗҫӗн тухӑҫлӑхне тата малтанхи медицина пулӑшӑвӗн пахалӑхӗпе юрӑхлӑхне лайӑхлатасси пулса тӑрать.

Республикӑра пурӑнакансем сывлӑх сыхлавӗнчен мӗн кӗтеҫҫӗ? Кӳрекен пулӑшу вӗсемшӗн чӑннипех юрӑхлӑ пулнине тата ӑна вӑрӑм черетсенче тӑрса нушаланмасӑр, тарӑхмасӑр илме май килнине.

Эпир медицина пулӑшӑвӗпе пурте усӑ курма пултармалли майсене лайӑхлатас ӗҫсене пӗр ҫул хушши кӑна мар ентӗ пӗрин хыҫҫӑн тепӗрне пурнӑҫа кӗртсе пыратпӑр. Тӳрех татса калатӑп: чылайӑшне тунӑ та ӗнтӗ. Эпир мухтанма пултаракан ҫитӗнӳсемпе ӑнӑҫусем те ҫук мар.

Эпӗ пӗтӗм медицина инфратытӑмне, фельдшерпа акушер пун-кчӗсенчен тытӑнса, ҫӗнетме тӗллев лӑртнӑччӗ. 7 ҫул хушшинче республикӑра кивелсе тата юхӑнса ҫитнисем вырӑнне медицина оборудованийӗпе пуянлатнӑ 206 ҫӗнӗ фельдшерпа акушер пункчӗ туса лартнӑ.

Аякри ялсенче пурӑнакан ҫынсене пулӑшу пама кашни районтах куҫса ҫӳрекен хӑйӗн медицина комплексӗ пур, вӑл ҫитме йывӑр тата ҫын сахал пурӑнакан ялсенчи халӑха, 33 пин ытла ҫынна, медицина тишкерӗвӗ тума май парать. Ҫавна пула онкологи чирӗсен ҫурринчен ытларах тӗслӗхне малтанхи тапхӑрта, ҫын пурнӑҫне сыхласа хӑварма шанӑҫ пур вӑхӑтра, тупса палӑртаҫҫӗ.

**Ҫӑлса хӑварнӑ кашни пурнӑҫ – ахаль статистика кӑтартӑвӗ ҫеҫ мар, вӑл ҫемье ырлӑхӗ, ашшӗ-амӑшӗн тата ачасен телейӗ.**

Эпир ҫавӑн пекех сывлӑх сыхлавӗн учрежденийӗсен 45 процентпа танлашакан лаптӑкне тӗпрен ҫӗнетрӗмӗр, вӗсене «перекетлӗ производствӑн» пысӑк технологиллӗ оборудованийӗпе пуянлатрӑ-мӑр. Юлашки пилӗк ҫулта ҫав тӗллевсем валли 7,5 миллиард ытла тенкӗ янӑ.

Республика тӗп хулинче юлашки 30 ҫулта пуҫласа эпир хальхи стандартсене пӑхӑнса туса лартнӑ, 780 миллион тенкӗ тӑракан нумай профильлӗ поликлиника уҫрӑмӑр. Халӗ Шупашкарта пурӑнакан хӗрӗх пин ҫыншӑн медицина пулӑшӑвӗн юрӑхлӑхӗпе пахалӑхӗ палӑрмаллах лайӑхланать.

Килес ӑрусен сывлӑхӗшӗн тӑрӑшса пӗлтӗр эпир «Ҫамрӑк мӑшӑрсен сертификачӗ» программӑна ӗҫе кӗртрӗмӗр – кашни ҫамрӑк ҫемьех паян перинаталь

центрӗсен ертсе пыракан специалисчӗсем патӗнче комплекслӑ тӗпчев иртме пултарать.

Эпир васкавлӑ медицина пулӑшӑвӗн тухӑҫлӑхне ӳстерес тӗлӗшпе те нумай ӗҫ туса ирттертӗмӗр. Федераци тата регион программисене пурнӑҫланине пула 2016 ҫултанпа службӑн пӗтӗм автопаркне ҫӗнетнӗ, ку вӑл – 189 автомобиль. Бригада йыхрав илнӗ хыҫҫӑн вырӑна ҫитекен вӑтам вӑхӑт паян вун пӗр минута ҫити кӗскелнӗ. **«Васкавлӑ пулӑшу» ӗҫӗн тухӑҫлӑхӗ енӗпе республика Раҫҫей Федерацийӗн сакӑр вун пилӗк субъекчӗ хушшинче виҫҫӗмӗш вырӑн йышӑнать!**

Халӑхӑн ҫуралнӑранпа шута илекен пурнӑҫӗн тӑршшӗ ӳсни Чӑваш Ен медицина отраслӗн ӗҫӗн тӗп кӑтартӑвӗ пулса тӑчӗ. Пӗлтӗр асӑннӑ кӑтарту пуҫласа 73 ҫултан иртрӗ.

**Эпир хамӑр ума 2030 ҫул тӗлне халӑхӑн кӗтекен пурнӑҫ тӑршшӗн кӑтартӑвне 80 ҫултан иртterme тӗллев лартатпӑр. Ӑна пурнӑҫлама кирлине Раҫҫей Президенчӗ палӑртнӑ.**

Ун валли мӗн тумалла-ха?

<u>**Пӗрремӗшӗнчен,**</u> фельдшер пункчӗсемпе врач амбулаторийӗсене ҫӗнетмелли программӑна вӗҫлемелле тата ҫитес 5 ҫуллӑха малтанхи медицина пулӑшӑвӗн юрӑхлӑхӗпе ҫыхӑннӑ мӗн пур ыйтӑва кун йӗркинчен кӑлармалла.

<u>**Иккӗмӗшӗнчен,**</u> эпӗ республикӑри мӗн пур поликлиникӑпа стационартах хӑтлӑ майсем йӗркелеме тӗллев палӑртнӑччӗ. Кӑҫалах ҫакӑн валли эпир республика бюджетӗнчен хушма майпа 1 миллиард тенкӗ уйӑратпӑр.

Ҫынсем Шупашкарти хулан ача-пӑча 2-мӗш больницин инфекци корпусӗнчи сиплев условийӗсем япӑх пулни пирки тӗрӗсех ӳпкелешетчӗҫ. Чӑннипех те, эпир ӑна вӑрах вӑхӑт юсаймарӑмӑр.

Халӗ больницӑна юсаса ҫӗнетес ӗҫ вӗҫленсе пырать, ун ҫумне тӗксе 50 вырӑнлӑ, уйрӑмшар палатӑллӑ ҫӗнӗ корпус хӑпарӑнать, унта пӗчӗк пациентсемшӗн пачах урӑхла условисем йӗркеленеҫҫӗ. Ҫӗртме уйӑхӗнче объекта хута яратпӑр. Унта пуриншӗн те – ачасемпе вӗсен ашшӗ-амӑшӗшӗн те, врачсемшӗн те меллӗ тата хӑтлӑ пулать.

**2020 ҫулта пӗтӗмпе сывлӑх сыхлавӗн 15 объектне туллин юсаса ҫитермелле.**

<u>**Виҫҫӗмӗшӗнчен,**</u> ҫул ҫинчи транспорт инкекӗсенче вилеслӗхе эпир пӗрре ҫурӑ хут чакарма пултартӑмӑр пулсан та, ку кӑтарту ҫаплах пысӑк шайра юлать-

ха. Шел те, ҫул ҫинчи транспорт инкекӗнче шар куракансенчен виҫҫӗ тӑваттӑмӗш пайӗ врачсем килсе ҫитиччен пурнӑҫран уйрӑлать. **Ҫавна май 2020 ҫулта авиацин санитари службине туса хурас ӗҫе вӗҫлеме тӗллев лартатӑп.**

Тӑваттӑмӗшӗнчен, республикӑн сывлӑха сыхлас ӗҫ тытӑмне пысӑк ӑсталӑхлӑ кадрсемпе тивӗҫтерсе тӑрасси ӑна аталантармалли тӗп ҫул-йӗр шутланать.

Аккредитаци тытӑмне ӗҫе кӗртнине пула сывлӑха сыхлас ӗҫ отраслӗ майӗпен медицина кадрӗсемпе пуянланса пырать. Тӗслӗхрен, 2019 ҫулта медицина енӗпе аслӑ пӗлӳ паракан вӗренӳ заведенийӗсенчен вӗренсе тухнисен виҫҫӗмӗш пайӗ пуҫламӑш сыпӑкра ӗҫлет.

**Ҫитес пилӗк ҫулта пирӗн медицина организацийӗсенче пуҫламӑш сыпӑкри врачсем ҫитменнине тӗппипех пӗтермелле.**

**Халӑха упрасси, унӑн ӗҫлев вӑй-хӑватне сыхласа хӑварасси – пирӗн тӗп тӗллев. Ҫавӑнпа та ӗҫ тӑвакан влаҫ органӗсемпе вырӑнти хӑй тытӑмлӑх органӗсен ӑна пурнӑҫлас енӗпе пӗр-пӗринпе тухӑҫлӑн хутшӑнса ӗҫлемелле.**

**Хисеплӗ ӗҫтешсем!**

Сывлӑха ҫирӗплетмелли тата чирлесрен асӑрханмалли чи лайӑх мел вӑл – спорт, хастарлӑ хускану, организма пиҫӗхтерни!

Пӗлтӗртен тытӑнса республика «Спорт – пурнӑҫ йӗрки» анлӑ проекта пурнӑҫлама хутшӑнать. Вӑл Раҫҫей Президенчӗ палӑртнӑ тӗллеве – 2024 ҫул тӗлне ҫӗршывра пурӑнакан халӑхӑн 55 процентне физкультурӑпа тата спортпа тӑтӑшах хутшӑнма явӑҫтарассине – пурнӑҫа кӗртме пулӑшать. Паянхи куна пирӗн спортпа чӑннипех туслӑ ҫынсен тӳпи 46 процентпа танлашать.

Спортпа туслашма лайӑх майсем йӗркелени массӑллӑ физкультурӑпа сывлӑха ҫирӗплетес ӗҫе ачасемпе ҫамрӑксен шайӗнче кӑна мар, ҫавӑн пекех ӗҫлекен халӑх хушшинче те тухӑҫлӑрах йӗркелеме май парать.

Пурӑнакан вырӑнти спорт инфратытӑмне аталантарма кӑҫал республика бюджетӗнчен 500 миллион тенкӗ уйӑрма палӑртнӑ, ҫав шутран 300 миллиона яхӑн тенкӗ 10 муниципалитет пӗрлӗхӗнче ятарлӑ газонлӑ тулли виҫеллӗ 10 футбол уйӗ тума тӑкакланать.

Тата 200 миллион тенке эпир республикӑри 19 районти, икӗ хулари спорт объекчӗсене тӗпрен юсама яратпӑр.

Кӑҫал хута ямалли спортӑн пысӑк объекчӗсен шутӗнче – Элӗк салинчи тата И.Н.Ульянов ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх университетӗнчи бассейнсем.

Паян республикăра пĕтĕмпе **82 бассейн** шутланать.

Аса илтеретĕп: 2019 çулхи раштав уйăхĕнче эпĕ «Ачасен сывлăхне çирĕплетмелли тата вăй-халне аталантарма пулăшмалли хушма майсем çинчен» калакан Указа алă пусрăм, ăна пурнăçланă май пуçламăш классенче вĕренекен ачасене тӳлевсĕр майпа ишме вĕрентеççĕ. Çак утăм пире ачасен сывлăхне çирĕплетме май парать кăна мар, шыври инкексенчен асăрханма та пулăшать.

Кăçал çынсене сывă пурнăç йĕркине ăса хывтарас, ачасемпе çамрăксен спортне тата массăллă спорта аталантарассине лайăхлатас, спорт резервне хатĕрлес енĕпе ытти мерăсем те палăртса хăварнă.

**Хисеплĕ депутатсем!**

Эпир нихăçан та çут çанталăк пурлăхне шанса ĕçлемен. Экономика ӳсĕмне пирĕн республикăра инновациллĕ производствăсем йĕркелесе, наукăпа техникăн юлашки çитĕнĕвĕсемпе усă курса, çавăн пекех пысăк ăсталăхлă ĕç вăйĕ пулнипе кăна тивĕçтерме пулать.

Ĕç рынокĕнче конкуренцие тӳсме пултаракан кадрсене вĕрентсе хатĕрлеме ку чухнехи тухăçлă вĕренӳ тытăмĕ кирлĕ. Çын аталанăвĕн пахалăхне ытларах чухне шăпах вĕренӳ тивĕçтерет – вăл ăна лайăх специалист пулма пулăшать, унăн предпринимательлĕх пултарулăхне аталантарать, унран çивĕч ыйтусене ăнăçлăн татса пама пĕлекен пултаруллă йĕркелӳçĕ тăвать.

Çавăнпа та çын аталанăвне эпир яланах пысăк укçа хыватпăр. Иртнĕ çулта кăна республикăн пĕрлештернĕ бюджечĕн «Вĕренӳ» пайĕ тăрăх тунă тăкаксен калăпăшĕ 20 миллиарда яхăн тенкĕпе танлашнă.

Вĕренӳ сферинче капашсăр пысăк ĕç туса ирттернĕ. Унăн тĕп кăтартăвĕсенчен пĕри шкулчченхи вĕренĕве вăйлăн аталантарни пулса тăчĕ.

Паянхи кун тĕлне виçĕ çултан аслăрах ачасене ача сачĕсенчи вырăнсемпе çĕр процентчĕпех тивĕçтернĕ.

Ачасене пĕлӳ памалли ку чухнехи хăтлă майсем туса хума тата иккĕмĕш сменăна пĕтерме республикăра 13 шкул тунă тата юсаса çĕнетнĕ, 3800 вĕренӳ вырăнĕ йĕркеленĕ.

Пĕлтĕр Шупашкарта Ачасемпе çамрăксен пултарулăхĕпе талантне тупса палăртакан тата аталантаракан центр уçăлчĕ, вăл «Сириус» моделĕпе «Наука», «Искусство» тата «Спорт» çул-йĕрĕсем енĕпе ĕçлет. Малашне асăннă центр пултаруллă ачасемшĕн тухăçлă «социаллă лифт» пулса тăмалла.

Алă вăйĕпе тăвакан ĕçе тата управленин кивелнĕ меслечĕсене пур çĕртен те хĕссе кăларакан условисенче тата автоматизаципе компьютеризаци мелĕсем анлăн ĕçе кĕнине пула вĕрентӳ тытăмне тата кадрсене вĕрентсе хатĕрлессине лайăхлатмалли майсем те улшăнаççĕ. Çавăнпа та эпир професси вĕренĕвĕн тытăмĕнче ку чухнехи тухăçлă инфратытăм туса хурас ĕçе малалла та укçатенкĕ хыватпăр.

50 мастерской тунă, пĕтĕм тĕнчери стандартсене тивĕçтерекен ку чухнехи пысăк технологиллĕ оборудованипе пуянлатнă 8 компетенци центрĕ ĕçлет. **Пĕтĕмĕшле илсен, професси вĕренĕвĕн аталанăвне 5 çулта пĕтĕмпе 7 миллиард ытла тенкĕ хывнă.**

Техникумсемпе колледжсенчи студентсене мĕнлерех вĕрентсе хатĕрленине хак пама май паракан тухăçлă мел Ворлдскиллс (Worldsrills) юхăм шутланать.

Хусанта иртнĕ «Çамрăк профессионалсем» VII Наци чемпионачĕн финалне хутшăнса Чăваш Ен делегацийĕ Раççейри 82 регион хушшинче пĕтĕм команда йышĕнче 16-мĕш вырăна тивĕçрĕ.

**Вĕренекенсемпе вĕсен вĕрентекенĕсене тата ашшĕ-амăшне çакăн пек лайăх кăтартушăн чун-чĕререн тав тăватăп! Малалла та çаплах маттур пулăр!**

Эпĕ çавăн пекех республикăри пĕтĕм вĕрентекене тав тăвас тетĕп. Çитĕнекен ăрăва воспитани парас енĕпе тăвакан вĕрентекен ĕçĕн пĕлтерĕшне хак пама та йывăр. Класс ертӳçисене уйрăммăн палăртса тав сăмахĕ калатăп. Эсир пĕлетĕр: çĕршыв Президенчĕ мĕн пур класс ертӳçине (республикипе 6900 яхăн çын) вĕсен яваплă та пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçĕшĕн 5 пин тенкĕ хушса тӳлесси çинчен йышăну турĕ.

Малашлăхри çывăх çулсенче пирĕн умра çак тĕллевсем тăраççĕ.

**<u>Пĕрремĕшĕнчен</u>,** паян республикăра шкулчченхи организацисенче пĕр çулталăкран аслăрах ачасен 77 ытла процентне вырăн-семпе тивĕçтернĕ**.** Ача амăшĕн, хăйĕн кăмăлне кура, декретлă отпуска маларах вĕçлесе ĕçе тухма май пултăр тесен, çавнашкал вырăнсемпе пепкесене çĕр процентпех тивĕçтермелле.

Çакăн валли 2020-2021 çулсенче тата 1840 вырăнлă 9 ача садне хута ямалла.

**Иккĕмĕшĕнчен,** паянхи кун тĕлне 30,5 пин ытла ача кивелнин шайĕ 50 тата унтан та пысăкрах процентпа танлашакан шкулсенче вĕренет. Хальхи требованисене тивĕçтерекен майсем туса хума, пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан организацисене тĕпрен юсама кăçал 510 миллион тенкĕ каять. Унсăр пуçне пуçламăш классенче вĕренекенсем валли вĕрентӳ сĕтел-пуканне туянма 200 миллион тенкĕ уйăрса параççĕ. Çакă çителĕксĕр тесе шутлатăп. Министрсен Кабинетне вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе пĕрле виçĕ çул хушшинче шкулсене хальхи вăхăтри сĕтел-пуканпа туллин тивĕçтерме хушатăп.

**Виççĕмĕшĕнчен,** пирĕн тата 190 шкулта апат-çимĕç блокĕсене çĕнетмелле. Ку ĕçе вĕçлес пулать. Кăçалхи авăнăн 1-мĕшĕнчен пуçласа вара пуçламăш классенче вĕренекен 62 пин ытла ачана тӳлевсĕр вĕри апатпа тивĕçтермелле.

**Тăваттăмĕшĕнчен,** Шупашкарти ачасен «Кванториум» технопаркĕн ĕç опычĕ асăннă площадка ачана çут çанталăк пĕлĕвĕсем енĕпе тата инженерипе техника çул-йĕрĕпе аталантарма пулăшнине ĕненмелле çирĕплетсе пачĕ. 2020-2021 çулсенче ачасен куçăмлă тата 3 технопаркне уçма тĕллев лартатăп.

**Пиллĕкмĕшĕнчен,** ял ачисене «Технологи», «Информатика», «Пурнăç хăрушсăрлăхĕн никĕсĕсем» предметсемпе лайăх пахалăхлă пĕлӳ илме майсем туса парас шутпа ялти 40 шкулта гуманитарипе цифра профильлĕ «Ӳсĕм вырăнĕ» центрсем туса хунă. Вĕсене пурне те хальхи вăхăтри компьютер тата интерактивлă оборудованипе тивĕçтернĕ. Республикăн Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерствине 2024 çулччен çавнашкал тата 140 центр туса хума хушатăп.

«Вĕренӳ» наци проектне пурнăçлама 6 çул хушшинче 100 ытла миллиард тенкĕ уйăрма палăртнă. **Эпир çакна лайăх пĕлсе тăратпăр: çын аталанăвне инвестицисем хывни – ăнăçуллă ĕç! Ачасен пуласлăхĕ пирĕншĕн уйрăмах пĕлтерĕшлĕ!**

Хисеплĕ депутатсем!

Хăть хăш саманара та аталанăва яш-кĕрĕмпе хĕр-упраç хăват кӳрет. Паян вăл – влаçăн ырă пуçарусене ĕçе кĕртес тĕлĕшри чи шанчăклă ĕçтешĕ. Çывăх вăхăтрах вара шăпах хастар, лайăх пĕлӳ илнĕ çамрăк çынсен муниципалитета тата патшалăха тытса пырассине хăйсен аллине илме тивет.

Çавăнпа та эпир çамрăксене пултарулăхне туллин уçса пама пулăшакан майсем туса пани пысăк пĕлтерĕшлĕ. Яш-кĕрĕмпе хĕр-упраçа пур пек социаллă

çăмăллăхсем çинчен те анлăрах пĕлтерсе тăмалла – патшалăх пулăшăвĕпе вĕсенчен кашниех усă курма пултартăр.

Тата, паллах, республика илĕртӳллĕрех, пурăнма хăтлăрах пулса пытăр тесен мĕн тумаллине те пирĕн чăн малтанах вĕсенчен ыйтмалла.

Республикăри çамрăксен нушисемпе интересĕсене тата чун туртăмне уçăмлатма пулăшакан анлă социологи тĕпчевĕ туса ирттерме хушатăп. Унăн пĕтĕмлетĕвĕсене тĕпе хурса яш-кĕрĕмпе хĕр-упраçа хăйĕн пултарулăхне туллин уçма пулăшакан майсем туса памалли мерăсен комплексне хатĕрлеме, ăна ăс-хакăлпа кăмăл-сипет воспитанийĕ парассине тивĕçтерекен пĕрлехи информаци анлăхне йĕркелеме хушатăп.

Чăваш Ене аталантармалли паха шухăшсем сĕнме пултаракан тата çĕнĕлле шухăшлакан çивĕч ăслă, пултаруллă та хастар яш-кĕрĕмпе хĕр-упраçа пĕрлештерсе тăракан çамрăксен общество юхăмне туса хума вăхăт çитнĕ тесе шутлатăп.

Çав вăхăтрах çакна та шута илмелле: хальхи вăхăтри информаци технологийĕсен тĕнчи çамрăксене çĕнĕ пĕлӳсемпе хăнăхусене алла илме майсем туса парать кăна мар, вĕсен хăрушсăрлăхне сиенлеме те пултарать. Радикаллă шухăшсем ытларах чухне шăпах çамрăксен хушшинче сарăлас хăрушлăх пысăк. Çавăнпа та аркату тĕллевлĕ информациpен асăрхаттармалли тата хӳтĕлемелли меслетсене туса хатĕрлемелле.

Тата тепĕр питĕ пĕлтерĕшлĕ туртăм çине тимлĕрех пăхма ыйтатăп – Раççей Президенчĕ добровoлецсен организацийĕсене гражданла общество йĕркелемелли никĕс вырăнне хурать.

Волонтер юхăмне мĕн чухлĕ ытларах çын хутшăнать, халăхшăн кирлĕ те усăллă ĕçсене çавăн чухлĕ ытларах тума май килет. Çавна кура çамрăксене волонтер юхăмне хутшăнтарассипе çыхăннă ĕçе малалла тăсма сĕнетĕп.

**Хисеплĕ ĕçтешсем!**

Чăваш Республикин пĕтĕмĕшле аталанăвĕ тата унăн кашни уйрăм çыннин çитĕнĕвĕ ытларах чухне ăс-хакăл никĕсĕсене йĕркеллĕн сыхласа упранинчен тата çемье хаклăхĕсене тивĕçлипе çирĕплетсе пынинчен килет.

Çемье – чи хаклă та çывăх çынсем, нимрен хаклă тăван кил-йыш, вăл пире хамăра чăннипех телейлĕ туйма пулăшать. Ваттисен сăмахĕ ахальтен мар: «Çемьери çынсем пурте килте чухне чун та вырăнта», – тесе палăртать.

Чăваш Ен халăхĕшĕн çемье хаклăхĕсем хăть хăш саманара та тĕп вырăнта тăраççĕ. Унăн çемье пурнăçĕн никĕсĕсем çаксем – мăшăрсен çирĕп пĕрлĕхĕ, ачасемшĕн тăрăшни, атте-аннене сума суни, пĕр-пĕрне шанса хисеплени, шанчăклăх тата иксĕлми юрату.

Республикăра федерацин Атăлçи округĕнчи регионсен хушшинчи чи пĕчĕк уйрăлусен шучĕ пĕр çул çеç мар палăрать. **Туслă та çирĕп çемьесем пирĕн ĕмĕрхи йăла-йĕрке хаклăхĕсене ятарлă майпа сарма тăрăшакан гражданла мăшăрланупа ирĕклĕ хутшăнусен «моди» нихăçан та улăштарма пултарайманнине ĕненмелле çирĕплетсе параççĕ.**

Ачаллă çемьесене патшалăх паракан социаллă пулăшупа ти-вĕçтерме 6 çул хушшинче 26 миллиард ытла тенкĕ уйăрма палăртнă.

Кăçалтан пуçласа пĕрремĕш ача çуралсан кашни уйăхра паракан тӳлеве памалла тунă чухне шута илекен кирлĕлĕх виçине улăштарнă. Çемьен çын пуçне тивекен тупăш виçине пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк виçен пĕрре çурă шайĕнчен икке çитиччен пысăклатнă, тӳлев вăхăтне ача виçĕ çула çитичченхи тапхăр таран тăснă. Асăннă улшăнусем вăя кĕриччен тӳлеве çемьесен 55 проценчĕ илсе тăнă. Халĕ эпир вĕсен шутне 82 процента çити пысăклатма пултаратпăр, ку вăл 8700 ытла çемье. Çакă, паллах, малтанхи цифрăсем.

Кăçалтан тытăнса çавăн пекех çемьесене виççĕмĕш е ун хыççăнхи ачасемшĕн тӳлев уйăрса панă чухнехи кирлĕлĕх виçине пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк 2 виçене çити улăштарнă. Асăннă пулăшу майĕпе çемьесен 95 процентне тивĕçтерме палăртатпăр.

Ача çуратассине хавхалантарма, çавăн пекех сахал тупăшлă тата нумай ачаллă çемьесене пулăшма калама çук пысăк укçа уйăраççĕ.

**Нумай ачаллă ашшĕ-амăшĕ пулма хатĕрленекен мăшăрсемшĕн çакă лайăх хыпар пулĕ тетĕп – эпир те виççĕмĕш тата ун хыççăнхи ачасем çуралсан паракан республикăри амăшĕн капиталĕн виçине пĕрре çурă хут – 100 пинрен 150 пин тенке çити – ӳстересси çинчен йышăну турăмăр!**

**Кашни çемьерех телей, тулăх пурнăç, пĕр-пĕрне ăнланни тата иксĕлми юрату хуçаланнă, кашни килтех ачасен хаваслă сасси илемлĕн янăраса тăнă чухне пирĕн общество та çирĕп, патшалăхăмăр та вăйлă!**

Хаклă туссем!

Пурăнмалли çурт-йĕр ыйтăвĕ кашни çемьешĕнех, кашни çыншăнах пĕлтерĕшлĕ.

Çынсене вӗсен пурӑнмалли çурт-йӗр условийӗсене лайӑхлатас енӗпе патшалӑх пулӑшӑвне парасси мӗн пур шайри влаç органӗсемшӗн пӗлтерӗшлӗ тӗллев шутӗнче.

Пурӑнмалли çурт-йӗр программисене пурнӑçа кӗртнӗ юлашки тӑватӑ çул хушшинче çакӑн валли тӗрлӗ шайри бюджетсенчен 10 миллиард ытла тенкӗ уйӑрнӑ, 20 пин ытла çемье патшалӑх пулӑшӑвне тивӗçнӗ.

Кӑçал çавнашкал пулӑшӑва 4 пин ытла çемье илме пултарать. Асӑннӑ тӗллевсем валли тӗрлӗ шайри бюджетран 1 миллиард та 700 миллион ытла тенкӗ каять.

Тӑвакан хваттерсем лайӑх сутӑнаççӗ, ку тӗлӗшпе граждансене ипотека кредичӗсем уйӑрса парас ӗçе аталантарни ырӑ витӗм кӳрет. Кӑçалтан тытӑнса ял ипотекине ӗçе кӗртнине пула харпӑр хӑй валли çурт-йӗр тӑвас ӗç аталанӑвӗ те хушма майпа çӗнӗ вӑй илет.

**Пур пек майсене шута илсе Чӑваш Ен Строительство министерстви умне вырӑнти хӑй тытӑмлӑх органӗсемпе тата строительство отраслӗн организацийӗсемпе пӗрле 2020 çулта 750 пин тӑваткал метртан сахал мар пурӑнмалли çурт-йӗр лаптӑкне хута ярассине тивӗçтерме тӗллев лартатӑп.**

Эпӗ çурт-йӗр ыйтӑвне татса парасси çинчен калаçнӑ чухне туса лартнӑ çурт-йӗре кӑна мар, çавӑн пекех хамӑр пурӑнакан пӗтӗм хула е ял хутлӑхне те шута илетӗп.

**Çынсем влаç органӗсен ӗç тухӑçлӑхне хӑйсен йӗри-таврашӗнче кунсерен пулса иртекен ырӑ улшӑнусем тӑрӑх хаклаç-çӗ. Каçхине подъездра çутӑ çунать-и? Картише кирлӗ пек тасатаççӗ-и? Унта ача-пӑча площадки, чечек клумбисем, меллӗ саксем пур-и тата? Хӑйсем куллен утса çӳрекен тротуарсене юсанӑ-и?**

Ман шутпа, халӑх кӑмӑл-туйӑмне ытларах чухне шӑпах çак хутлӑх пахалӑхӗ палӑртать. Кашни çынах хӑтлӑхра пурӑнасшӑн, хӑйӗн тӑван хулинче е ялӗнче пушӑ вӑхӑта çемйипе пӗрле канлӗн тата усӑллӑн ирттермелли хальхи вӑхӑтри обществӑлла хутлӑх пулнине те курасшӑн.

Палӑртса хӑваратӑп: 2011 çултан пуçласа эпир картишсене тата вӗсен патне пымалли çулсене тӗпрен юсамалли анлӑ програм-мӑна пурнӑçлама тытӑнтӑмӑр. Çак тапхӑрта 1900 яхӑн картиш территорине тата вӗсен патне пымалли 800 ытла çула юсанӑ. Ку чӑннипех пысӑк ӗç.

Раççей Строительство министерстви Раççей Федерацийĕн Президенчĕн Указне тĕпе хурса шутласа палăртакан хула хутлăхĕн пахалăх индексĕпе килĕшӳллĕн пирĕн республика федерацин Атăлçи округĕнче тирпей-илем кĕртнĕ хуласен тӳпи енĕпе тӳрех виçĕ ушкăнра – пысăк, вăтам тата пĕчĕк хуласен йышĕнче – малти ретре тăрать. Чăваш Енĕн тăхăр хулинчен пиллĕкĕшĕ 180 тата унтан та ытларах балл пухнă, эппин, кашнинчех унта хулан лайăх хутлăхне йĕркеленĕ.

Çапах лайăх хутлăх туса хурас ĕçе çав вырăнта пурăнакансем хăйсем те хастарлăн хутшăнни унтан та ытларах савăнтарать. Çакă кирек мĕнле программа та ăнăçлăн пурнăçланассине çирĕп шанчăк кӳрет. Çынсем управлени йышăнăвĕсене тунă çĕре хăйсем те хутшăннине пĕлсе-туйса тăнă чухне тирпей-илем кĕртнĕ территорисем те типтерлĕн сыхланса упранаççĕ.

**Кашниех хăй пурăнакан кил-çуртшăн, урамшăн, хулашăн тата пĕтĕм республикăшăн яваплă пулни тата вĕсене типтерлĕ упрани – юратнă Чăваш Енĕмĕр аталăнăвĕпе ырлăхĕн никĕсĕ.**

2019 çулхи чӳк уйăхĕнче муниципалитет пĕрлĕхĕсенчи çынсем пурăнакан хутлăхăн хăтлăлăхне ӳстермелли хушма майсем çинчен калакан йышăнăва çирĕплетнине эсир пĕлетĕр. Паян халăх пурăнакан 119 вырăнти 1200 ытла картиш территорине тирпей-илем кĕртмелле. Урамсене, картишсен территорийĕсене, кану вырăнĕсене тирпей-илем кĕртме, экопарковкăсем тума, çутăпа тивĕçтерме хушма майпа пĕр миллиард çурă тенкĕ уйăрма палăртнă. Хăйсем пурăнакан вырăнта ырă улшăнусем пулса иртнине 380 пине яхăнентеш, урăхла каласан, Чăваш Енре пурăнакан кашни виççĕмĕш çын курса савăнма пултарĕ.

Кăçал çавăн пекех 800 пин ытла çын усă куракан тротуарсен 370 пин ытла тăваткал метр лаптăкне юсаса йĕркене кĕртме палăртнă.

Республикăра кунсерен тĕрлĕ çул-йĕр енĕпе 365 пин тĕслĕх шайĕнче социаллă пулăшу параççĕ – поликлиникăсенче, шкулсемпе ача сачĕсенче, культурăпа спорт учрежденийĕсенче.

Кăçал эпир социаллă сферăри 800 ытла патшалăх тата муниципалитет учрежденине, е вĕсен 66 процентне, çĕнетме палăртатпăр. Ун валли бюджетран 8 миллиард тенкĕрен кая мар яратпăр. **Çав тĕллевсем валли çавнашкал пысăк укçа-тенкĕ халиччен пĕрре те уйăрни пулман, эпир çакна республикăра пурăна-кансемшĕн хăтлă майсем туса хурас шутпа тăватпăр.**

Çитменнине, çавна та манар мар, пирĕн хуласен урамĕсемпе картишĕсен тирпейлĕхĕ республикăн туризм вăй-хăватне ӳстерес ĕç çине пысăк витĕм кӳрет.

2019 çулта эпир «Чăваш Ен – Атăл чĕри» туризм кластерне тума тытăнтăмăр. Ку проекта Раççей Федерацийĕн Правительстви ырланă, ăна пурнăçлама мĕн пур финанс çăл куçĕнчен 2 миллиарда яхăн тенкĕ уйăраççĕ.

Шупашкар заливне, Хĕрлĕ тӳреме, çавăн пекех арçынсен Çветтуй Троица православи мăнастирĕ патĕнчи Мускав çыранлăхне юсаса çĕнетме палăртнă. Шупашкар çыннисем те, республикăн тĕп хулин хăнисем те тем пекех килĕштерекен çав кану вырăнĕсем юсаса çĕнетнĕ хыççăн тата та илĕртӳллĕрех пуласси пирки иккĕленместĕп.

2019 çулта Етĕрне хули хăтлă хула хутлăхне йĕркелемелли чи лайăх проектсен Пĕтĕм Раççейри конкурсĕн çĕнтерӳçисенчен пĕри пулса тăчĕ. Хула поселенине тирпей-илем кĕртме федераци тата республика бюджечĕсенчен 50 миллион тенкĕ янă. Етĕрнешĕн çакă самаях пысăк укçа!

Эпĕ вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене хулара та, ялта та пурăнма пĕрешкел хăтлă условисем йĕркелеме май паракан çавнашкал проектсене туса хатĕрлесси çине уйрăмах тимлĕн пăхма чĕн-се калатăп.

**Хисеплĕ ĕçтешсем, хисеплĕ депутатсем!**

Эпир социаллă тĕллевлĕ патшалăх политикине тухăçлăн пур-нăçа кĕртетпĕр. Ватă çынсене, амăшлăхпа ачалăха, сусăрсене тата сахал тупăшлă çынсене пулăшу пама 2020 çулта 14 миллиард ытла тенкĕ пăхса хăварнă.

Республикăра пурăнакан пенси ӳсĕмĕнчи 205 пин ытла çын социаллă пулăшăвăн тĕрлĕ мелне 14 çул-йĕр енĕпе илет.

Пĕлтĕр ятарлă хăпарткăчсемпе тивĕçтернĕ, çавăн пекех питех тухса çӳреймен çынсене тата кӳмепе çӳрекен сусăрсене турттармалли вырăнсем пăхса хăварнă, 30 автомашина туяннă.

Пенси ӳсĕмĕнчисен халь ĕçлекен предприятирех ĕçлеме юлас тата хăйсен ĕç рынокĕнчи конкуренци пултарулăхне ӳстерес тĕллевпе çĕнĕ ĕçе вĕренме е ăсталăхне пысăклатма май пур. Кăçалтан пуçласа 50 çулти е аслăрах çынсем професси пĕлĕвĕ е хушма професси пĕлĕвĕ илме пултараççĕ.

Паян республикăра пурăнакан кашни виççĕмĕш çын социаллă пулăшу мелне илсе тăрать. Тĕслĕхрен, пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшу ĕçĕсемшĕн тӳлес енĕпе паракан çăмăллăхсемпе кăна пĕлтĕр 317 пин ытла çын пĕтĕмĕшле 1 миллиард та 300 миллион тенкĕлĕх усă курнă.

Кăçал социаллă пулăшу майĕсемпе тивĕçтерес ĕç малалла тăсăлать.

Пĕлтĕр Раççейĕн Ĕçлев министерстви Чăваш Республикине çынсен тупăшĕсене ӳстермелли тата чухăнлăх шайне 2024 çул тĕлне икĕ хут чакармалли пилотлă проекта пурнăçлакан Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен йышне кĕртрĕ.

Кăçалтан пуçласа, пилотлă проекта пурнăçа кĕртнĕ май, сахал тупăшлă çемьесене тата пĕччен пурăнакан чухăн çынсене социаллă контракт никĕсĕ çинче патшалăхăн социаллă пулăшăвĕпе тивĕçтерeççĕ.

Ĕçе вырнаçнăшăн е ĕçпе тивĕçтерекен служба пулăшнипе професси пĕлĕвĕ илнĕшĕн тӳлевсем евĕр паракан пулăшу мелне, çавăн пекех вĕреннĕ тапхăрта тӳлевсем уйăрса панипе вĕрентӳ курсĕшĕн тӳлесе татăлмалли мая пăхса хăварнă.

Хăйĕн ĕçне уçма шутлакан çынсемпе социаллă контрактсем çирĕплетеççĕ. Проекта ăнăçлă хӳтĕленĕ хыççăн çавнашкал çынсене предприниматель ĕç-хĕлне 3 çултан кая мар пурнăçламалли условипе 250 пин тенкĕ уйăрса параççĕ.

Çавăн пекех çемьесене кашни уйăхра, анчах та 12 уйăхран ытла мар, 10 пин тенкĕ виçепе тӳррĕн укçа-тенкĕ пулăшăвĕ парассине те пăхса хăварнă (тӳлеве çемьери пĕр çынна параççĕ).

Кăçал 3800-тен кая мар социаллă контракт çирĕплетме палăртнă. Çав тĕлевсем валли федераци бюджетĕнчен кашни çулах 372 миллион та 400 пин тенкĕ уйăрса параççĕ. Социаллă контрактсене пула 14 пин ытла çыннăн тупăшĕсем чухăнлăх шайĕнчен çӳлерех шая хăпараççĕ.

Федераци Пухăвне янă хăйĕн Çырăвĕнче Раççей Президенчĕ Владимир Владимирович Путин кăçал Раççей Федерацийĕн Правительстви сахал тупăшлă çынсене социаллă пулăшу парас енĕпе йышăнакан питех те пĕлтерĕшлĕ мерăсене палăртса хăварчĕ.

Патшалăх паракан социаллă пулăшăвăн çав çĕнĕ çул-йĕрĕсем, çавăн пекех республикăра йышăнакан çĕнĕ хушма мерăсем, пире чухăн çынсен тӳпине çулталăк хушшинче 2,5-3 процента çити чакарма май параççĕ.

**Хаклă туссем!**

Çын сывлăхĕн тăрăмне йĕркелекен витĕмлĕ сăлтавсенчен пĕри çут çанталăк хутлăхĕн пахалăхĕ пулса тăрать. Шăпах таврари çут çанталăк пире мĕн кирлипе тивĕçтерсе тăрать.

Пирĕн республикăра çут çанталăка хӳтĕлессипе çыхăннă ыйтусене татса парас ĕçре влаç органĕсемпе гражданла общество институчĕсен тухăçлă çыхăнăвне йĕркелеме пултарни савăнтарать.

«Симĕс патруль» экологи общество организацийĕн экспертсен хаклавĕ тăрăх, экологи лару-тăрăвĕ енĕпе Чăваш Ен федерацин Атăлçи округĕнче 2-мĕш тата Раççейри пĕтĕм наци шайĕнчи экологи рейтингĕнче 14-мĕш вырăнта тăрать.

Экологи тĕлĕшĕнчен пысăк пĕлтерĕшлĕ шутланакан инвестици проекчĕсене пурнăçлани пире чылай мала иртме пулăшрĕ.

Республика коммуналлă хытă каяшсене ĕçе ярас енĕпе Раççейри малта пыракан регионсен шутĕнче. Эпир Шупашкар хулинчи Питтукассин коммуналлă хытă каяшсен çӳп-çап вырăнне йĕркене кĕртсе Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар хулисенче тата Шупашкар районĕнче пурăнакан çĕр-çĕр пин çынна канăç паман пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйтăва татса патăмăр. Çав çӳп-çап вырăнĕ 60 çула яхăн ĕçленĕ. Паян ку районта сиенлĕ хутăшсен шайĕ санитари нормисене туллин тивĕçтерет.

Концесси килĕшĕвĕн шайĕнче çӳп-çапа сортировка тăвакан комплекспа тивĕçтернĕ коммуналлă хытă каяшсен полигонне йĕркеленĕ тата çӳп-çапа пушатса тиекен, унăн уйрăм тĕсĕсене сортлакан станци тунă.

Хальхи вăхăтра республикăри мĕн пур муниципалитет пĕрлĕ-хĕнче каяшсене пухмалли вырăнсем туса хатĕрленĕ, контейнерсем вырнаçтарнă.

Ялта тата хулара пурăнакансене коммуналлă хытă каяшсене ĕçе ямалли пысăк пĕлтерĕшлĕ çивĕч ыйтăва татса пани мĕнлерех пĕлтерĕшлĕ пулнине тĕрĕс ăнланнăшăн тав тăватăп.

Экологи хăрушсăрлăхне малалла ӳстерсе пыма **полигона килсе тăракан каяшсен шутне чакармалла тесе шутлатăп. Кăçалхи çул вĕçĕ тĕлне – хула округĕсенче, 2021 çулта вара пĕтĕм республикипе çӳп-çапа уйрăмшарăн пухма тытăнма тĕллев лартатăп. Ăна пурнăçлама çăмăл мар, анчах пулать.**

«Экологи» наци проектне пурнăçланă май пирĕн 2020-2023 çулсенче Канаш, Етĕрне хулисенчи, Элĕк, Елчĕк, Комсомольски, Сĕнтĕрвăрри, Шăмăршă районĕсенчи çичĕ çӳп-çап вырăнне йĕркене кĕртес ĕçсене туса пĕтермелле.

Коммуналлă хытă каяшсене вырнаçтармалли халь ĕçлекен 11 объект тапхăрăн-тапхăрăн хупăнать тата вĕсен вырăнĕсем йĕркене кĕрсе çитеççĕ.

**Çапла вара Чăваш Енре коммуналлă каяшсене чавса чикес ыйту пуçĕпех, шанса тăратăп, яланлăхах татăлать.**

Атӑла сыватас енӗпе тумалли ӗҫсене эпир малалла тӑсатпӑр. Ун валли 2024 ҫулччен «Атӑла сыватасси» регион проекчӗн шайӗнче Атӑла тата унӑн юпписене юхса тухакан таса мар каяш шывсен калӑпӑшне 3 хут чакарма май паракан 13 объект туса лартмалла.

Палӑртса хӑварас тетӗп: ҫитес виҫӗ ҫулта Чӑваш Ен Строительство министерствин Ҫӗнӗ Шупашкарти «Биологи мелӗпе тасатакан сооруженисем» патшалӑх унитарлӑ предприятийӗн шламсен отстойникӗпе шлам пухкӑчӗн вырӑнне йӗркене кӗртсе ҫитерме йышӑннӑ. Асӑннӑ объект Атӑла тасатмалли тытӑма кӗрекен объектсенчен чи пӗлтерӗшли шутланать. Ҫак тӗллевсем валли 1 миллиард та 143 миллион тенкӗ уйӑрма палӑртнӑ. Ҫавна пула 23 гектар ҫӗр хуҫалӑх ҫаврӑнӑшне кӗрет, ҫынсен сывлӑхӗн пахалӑхӗ те лайӑхланать.

Шывпа тивӗҫтерекен 550 ҫӑл куҫа (ку вӑл шыв илмелли скважинӑсем тата шыв пусӑм башнисем) юсаса йӗркене кӗртмелле. Асӑннӑ тӗллев валли республика бюджетӗнчен 340 миллиона яхӑн тенкӗ уйӑратпӑр.

Ҫавӑн пекех кӑҫал Шупашкар хулин Ҫурҫӗр-хӗвел анӑҫ микрорайонӗнчи насус станцийӗнчен тытӑнса Чантӑр ялне ҫитиччен шыв пӑрӑхӗсем хывас ӗҫе вӗҫне ҫитермелле, ҫакӑ пахалӑхлӑ ӗҫмелли шывпа тивӗҫтернӗ хула ҫыннисен тӳпине 96,5 процента ҫитерме май парать.

Пӑрачкав салинче шыв пӑрӑхӗсем тӑвас ӗҫӗн иккӗмӗш тапхӑрне те вӗҫлемелле.

**Кӑҫал 400 гектар ытла лаптӑкра вӑрмансене ҫӗнетмелли ӗҫсене туса ирттерме палӑртнӑ. Ҫапла вара эпир 2010 ҫулта ҫуннӑ вӑрман вырӑнӗсенче вӑрман лартса ӳстерес ӗҫе туллин вӗҫлетпӗр.**

**Хисеплӗ ӗҫтешсем, хисеплӗ депутатсем!**

Транспорт инфратытӑмӗ общество пурнӑҫӗн мӗн пур сферине аталантарас ӗҫре пӗлтерӗшлӗ вырӑн йышӑнать. Ҫулсен пахалӑхӗ – республикӑн ятсумне йӗркелекен тӗп паллӑсенчен пӗри, унӑн инвестици вӑй-халӗн паха кӑтартӑвӗ.

Юлашки 10 ҫулта республикӑра 2 пин ҫухрӑм ытла ҫула юсанӑ. Пӗлтӗр кӑна автомобиль ҫулӗсем тума, юсаса ҫӗнетме, юсама тата тытса тӑма 5 миллиард ытла тенкӗ янӑ.

Пирӗн ӗҫӗн тӗп кӑтартӑвӗ – ҫынсен пурнӑҫне сыхласа хӑварни. Чӑваш Ен территорийӗнче ҫул ҫинчи транспорт инкекӗсен шучӗ, вӗсенче аманнисен тата вилнисен хисепӗ шайлашуллӑн чакса пырать. «Хӑрушлӑхсӑр тата лайӑх па-

халăхлă автомобиль çулĕсем» наци проектне пурнăçланă шайра 2024 çул тĕлне çул-йĕр çинчи транспорт инкекĕсенчи вилеслĕх кăтартăвне 100 пин çын пуçне 4 çынран иртмен шая çитерес тĕллев тăрать.

Пирĕн республикăн тĕп хулинче урампа çул-йĕр сетьне аталантарас, тĕп транспорт магистралĕсен ирттерме пултараслăхне ӳстерес, транспорт коридорĕсен пĕр пĕтĕм тытăмне туса хурас, аварисен шутне чакарас тĕлĕшпе нумай тунă.

Эпир федераци влаçĕпе тухăçлă хутшăнса ĕçленине пула республика кăçалах федераци бюджетĕнчен çĕнĕ троллейбуссем, çав шутра хăйсем тĕллĕн çӳреме пултараканнисене, туянма çĕр-çĕр миллион тенкĕ илет.

Асăннă укçа-тенкĕпе Шупашкарти тата Çĕнĕ Шупашкарти троллейбус управленийĕсем хăйсен автопаркне палăрмаллах çĕнетме пултараççĕ. Çакă пассажирсем турттарас ĕç пахалăхне лайăхлатма пулăшакан калама çук паха мел! Пирĕн транспорт ĕçченĕсен çав-нашкал лайăх майсем нихăçан та пулман!

Хисеплĕ ĕçтешсем!

Чăваш Ен территорийĕнчи халăхсем мĕн ĕлĕкрен пĕр-пĕрне ырă сунса, ăнланса, нацисемпе тĕнсен хушшинчи çураçулăха упраса тата туслăн килĕштерсе пурăнаççĕ.

Пирĕн халăхăн культури пĕтĕм этемлĕхĕн ĕмĕрхи хаклăхĕсем, çемьери çирĕп çыхăну, юрату тата ăнлану çинче никĕсленет. Вĕсем пирĕншĕн пуриншĕн те пултаруллă вăй-халпа хавхалану кӳрекен иксĕлми çăл куç пулса тăраççĕ.

Чăваш Енре патшалăх политики мĕн пур наци çыннине пĕр-пĕрин ăсхакăлĕпе пуянланма, çураçуллăн малалла аталанма, хăйĕн чĕлхине тата культурин еткерлĕхне тивĕçлипе сыхласа упрама пулăшакан майсем йĕркелеме палăртать. Çавăнпа та культура сферине аталантарасси тата пулăшасси пирĕншĕн чи пĕлтерĕшлĕ тĕллевсен шутĕнче.

Иртнĕ çул Чăваш Республикин пĕрлештернĕ бюджетĕнчен отрасль валли уйăрнă укçа калăпăшĕ 3 миллиард та 600 миллион тенкĕпе танлашнă. Вунă çул хушшинче вăл 2,8 хут ӳснĕ. Ку тапхăрта 250 ытла клуб учрежденине тĕпрен юсанă.

Кăçал культура учрежденийĕсене юсама тата çĕнетме, библиотекăсемпе архивсен, çавăн пекех ача-пăча ӳнер шкулĕсен пурлăхпа техника никĕсне çирĕплетме 600 ытла миллион тенкĕ каять.

Чăваш автономи облаçне йĕркеленĕренпе 100 çул çитнине уявлама хатĕрленнĕ май 2016–2018 çулсенче ялти 18 культура çурчĕ туса лартрăмăр. Тата 7 клуба эпир кăçал хута яратпăр.

**Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен тата архив ĕçĕн министерствине вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе пĕрле 2021–2024 çулсенче ялти çĕнĕ тепĕр 25 культура çуртне хута ярассине тивĕçтерме хушатăп.**

Чăваш Ен çĕнетнĕ кинозалсем уçассипе Раççейре малта пыракансен йышне кĕрет. Федерацин Атăлçи округĕнче республика 1 çĕ-нĕ кинозал пуçне тивекен халăх шучĕпе иккĕмĕш вырăн йышăнать.

Искусство шкулĕсене çӳрекен ачасен йышĕпе республика федерацин Атăлçи округĕнче виççĕмĕш вырăнта тăрать.

Республика музейĕсем иртнĕ кун-çулăн аваллăхне сыхласа упрас тата ачасемпе çамрăксене патриотла воспитани парас ĕçре пысăк витĕм кӳреççĕ. Кăçал вĕсен чи пĕлтерĕшлĕ тĕллевĕ Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинчи Çĕнтерӳ 75 çул тултарнине тата Чăваш автономи облаçне йĕркеленĕренпе 100 çул çитнине уявланă вăхăтра проектсем пурнăçласси пулса тăрать.

Паян историе çĕнĕлле тата ăна пăсса çырма хăтланакансем каллех пуç çĕклеççĕ. Çавăнпа та хаяр вăрçă çулĕсенче пирĕн пĕр пĕтĕм халăх нихçан пулман хăюлăхпа паттăрлăх кăтартни, вăл Тă-ван çĕршыва пĕтĕм чунтан юратни çинчен çамрăксене чăннине каласа пани çав тери пĕлтерĕшлĕ.

Мухтавлă геройсен паттăрлăхĕ пире Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн çĕнĕ çĕнтерӳсемпе çитĕнӳсем тума хавхалантарать.

Эпĕ çакна пĕрре çеç каламан, çапах та тепĕр хут аса илтере-тĕп – влаç органĕсен умри тĕп тĕллевсене ăнăçлăн татса парас тесен Чăваш Енре пурăнакан çынсемпе тăтăшах хутшăнса тăмалла. Ахаль çынсен нушисемпе шухăшсĕнĕвне итлемелле кăна мар, вĕсене илтмелле тата ăнланмалла. Çавăн чухне кăна эпир умри тĕл-левсене пурнăçлама пултаратпăр.

Халăхпа тачă çыхăнса ĕçлемелле, хăйсен территорийĕнче е отраслĕнче палăракан тĕп çивĕч ыйтусене лайăх пĕлсе тăмалла. Çакна тума министерствăсемпе ведомствăсен, муниципалитет пуçлăхĕсен иртен пуçласа каçчен çынсене харпăр хăй ыйтăвĕпе йышăнма та кирлĕ мар.

Паян экономикăн тата общество пурнăçĕн пĕтĕм сфери цифра технологийĕсемпе тачă çыхăннă. Хамăн пĕлтĕрхи Çырура эпĕ должноçри мĕн пур

çынна социаллă сетьсем çине пысăк тимлĕх уйăрма, çынсен ыйтăвĕсене тарăнрах тишкерме тата вĕсемпе тивĕçлĕ çыхăну йĕркелеме чĕнсе каларăм. Унтанпа республикăри ĕç тăвакан влаçăн тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен ертÿçисенчен пурте тенĕ пекех анлăрах сарăлнă социаллă сетьсенче харпăр хăй аккаунтне уçрĕç. Çакă тĕрĕс йышăну. Çитменнине тата Чăваш Республикин территорийĕнче «Цифра танмарлăхне сиресси» программăна пурнăçланине пула «Интернет» сечĕпе çыхăнас тĕлĕшпе паян йывăрлăхсем çук.

Иртнĕ çултанпа ĕçе кĕртнĕ «Инцидент-менеджмент» мониторинг тумалли тытăм урлă çынсене кулленхи пурнăçра пăшăрхантаракан ыйтусемлĕ 9,5 пин ытла хыпар илнĕ. Республикăра пурăнакан хастар чунлă çынсене пула патшалăх влаçĕн органĕсем тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем тĕрлĕ сферăра йĕркеленнĕ çивĕч ыйтусен ытларах йышне (тĕрĕсрех каласан – 75 процентран кая мар пайне) вăхăтра тишкерме тата татса пама пултарнă.

Халăхпа интерактивлă майпа хутшăнса ĕçлемелли мелсене малалла та лайăхлатса пымалла тесе шутлатăп. Халăх влаç органĕсен ĕçĕпе кăмăллă пуласси çакăнтан та килет. **Уçăлăх, таса чунлăх, уççăнлăх – акă пирĕн тĕп принципсем, Чăваш Енре патшалăхпа муниципалитет влаçĕ гражданла обществăпа хутшăнса ĕçленĕ чухне вĕсене яланах асра тытать.**

Хаклă ентешĕмĕрсем!

Кăçал пире Чăваш Республикин Пуçлăхĕн тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен суйлавĕсем кĕтеççĕ.

Хăш халăх çынни пулнине, мĕнле тĕне ĕненнине е политикăри шухăшсене пăхмасăр, наци тĕллевĕсене пурнăçа кĕртессишĕн, патшалăхăмăр аталанăвĕпе ырлăхĕшĕн хăй пултарнă таран тăрăшасси – Раççейре пурăнакан кашни çыннăн тивĕçĕ.

Çавна шута илсе эпĕ мĕн пур политика вăйĕсене хăйсен ĕçĕнче партин пайăр интересĕсене мар, чи малтанах, хăйсен суйлавçисен – Чăваш Республикинче пурăнакан çынсен – нушисене тĕп вырăна хума чĕнсе калас тетĕп.

Паллах, эпир пурсăмăр та ăрасна, юратнă республикăмăр малалла мĕнлерех çулпа утмалли пирки те тĕрлĕрен шухăшлатпăр. Çавна май пĕтĕм çивĕч ыйтăва татса памалли универсаллă ăслай çуккине тата суйласа илекен кирек хăш аталану çулĕ те пĕртен-пĕр тĕрĕсси пулма пултарайманнине эпир пурте лайăх ăнланатпăр.

Çапах та пĕрле, пĕрлĕхе, ăс-хакăл пĕрлĕхне, хамăр хушăри тăнăçлăха та-та нацисен хушшинчи килĕшӳлĕхе упраса эпир паянхи чĕнӳсем тĕлĕшпе вырăнлă йышăну тума пултарасса эпĕ шанса тăратăп.

Пирĕн умра пĕрле татса памалли тĕллев чылай-ха. Чи малтан пурнăçламаллисенчен пĕри – социаллă хӳтлĕхе тата халăх пурнăçĕн тулăхлăхне ӳстересси. Пирĕнтен пурин умĕнче те чи çывăх çулсенче республикăна аталанăвăн пачах çĕнĕ шайне çĕклес тĕллев тăрать. Çавăнпа та мĕн шухăшласа хунине эпир сирĕнпе пĕрле йăлтах пурнăçлама пултарасси пирки эпĕ иккĕ-ленместĕп. Пире пурсăмăра та Тăван çĕршыва хĕрӳллĕн юратни пĕрлеш-терет.

Вăйсене пĕтĕçтерсе, **çирĕплĕхе упраса, тытăмлăн тата тĕллевлĕн ĕçлесе**эпир чи анлă тата курăмлă плансене темле пулсан та пурнăçлатпăрах.

«Ырлăхран ывăнман теççĕ», – вĕрентет халăхăмăрăн ăсĕ.

Мăн асаттемĕрсем шухăшсен тасалăхĕпе чун-чĕре ăшшине тĕрĕс-тĕкел сыхласа упрама, ытти çынна хисеплеме, ырă кăмăллă, сапăр та таса чунлă пулма халалласа хăварнă. Эппин, атьăр-ха, вĕсен ăс-хакăл халалне яланах асра тытса пурăнар.

Хисеплĕ депутатсем, ĕçтешсем!

Тăнăçлăхпа çураçулăх, тăван çĕр ырлăхĕшĕн яваплă пулнине туйса тăни пире Тăван çĕршывăмăра телейлĕ тата ăнăçуллă тума пулăшасса эпĕ çирĕппĕн шанса тăратăп!

Çакна тума пирĕн пĕтĕм май пур!

Итленĕшĕн пысăк тав!